38-92

КĔНЕКЕ ХЫÇÇĂН КĔНЕКЕ



РОМЕН
РОЛЛАН

# Жан Кристоф

Чăвашгосиздат 1938 Шупашкар



РОМЕН РОЛЛАН

# ЖАН КРИСТОФ

Н. УРХИ куçарнă

Ўкерчĕксем
А. МОГИЛЕВСКИН

ЧĂВАШСЕН ГОСУДАРСТВĂ ИЗДАТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР • 1938 ç.

*КĔÇĔН ТАТА ВĂТАМ ÇУЛХИ АЧАСЕМ ВАЛЛИ*



1

Аслашшĕ ачасене кивĕ, ванчăк ройаль панă.

Ашшĕпе амăшĕ куншăн ытлах савăнман.

— Мĕне кирлĕ ку?—тенĕ амăшĕ.—Пирĕн унсăр та тăвăр.

— Чăнах, вăл ниме те йурăхсăр. Вут чĕртме хăйă тусан çеç,—тесе хушса хунă ашшĕ.

Пĕр пĕчĕк Жан Кристоф кăна çак парнешĕн хĕпĕртенĕ.

Ройаль ăна пит тĕлĕнмеле пек, хăйне аслашшĕ вула-вула паракан „Пин те пĕр каç“ йумахĕсем пек туйăннă.

Ашшĕ клавишĕсене хăвăрт-хăвăрт пусса тухнă та, йăваш çил туратсем çинчен çĕре силлесе ÿкерекен çăмăр тумламĕсем пек çăмăл сасăсем кăларнă. Кристоф аллисене шап-шап çупса кăшкăрса йанă:

— Татах! Татах!—тенĕ.

Анчах ашшĕ ройале шант хупнă та:

— Машинă ниме те йурăхсăр,—тенĕ.

Çавăнтанпа Кристоф пĕрмайах инструмент тавраш ĕнче кус-

калана. Вăл ройаљ хупăлчине вăрттăн çĕкле-çĕкле клавишĕсене йерипен тĕкĕнкелет. Хăш чухне вăл васканипе хытăрах пусаť пулас та, вара ăна амăшĕ кăшкăраť:

— Хăçан есĕ тăп ларăн? Мĕн есĕ пурне те пырса тĕкĕнетĕн?—тет.

Вăл çиленсе ройаљ хупăлчине шалт хупа-хупа хăвараť; çапла пĕрре вăл Кристоф аллине пит хытă хĕстернĕ.

Амăшĕ килтен туха-туха кайсан аван вара. Кристоф амăше пусма тăрăх анса кайнине тăн! итлесе тăраť. Акă вăл урамра ĕнтĕ... ура сассисем айаккала кайаççĕ... Кристоф пĕчченех... Вăл ройале уçаť те пукан çине вырнаçса лараť. Кăшт сывлама чарăнса тăраť. Вăл шикленерех пўрнипе малтан пĕр клавишне, унтан тепĕр клавишне тĕкĕнет... сасартăк сасă кĕрлесе кайаť... Тĕрлĕрен сасăсем тухаççĕ: йе çемçе, йе хытă сасăсем; пĕрисем вĕт хăнкăрмасем пек чăнкăлтатаççĕ, теприсем чан пек кĕрлеççĕ... Вĕсем пĕтсе ларнине ача нумайччен итлесе лараť. Акă ĕнтĕ вĕсем пĕтсех-пĕтсех ларнă пек! Çук! Тата чĕтренсе тăраççĕ-ха...

Анчах пĕр тăрук икĕ клавиша çапсан татах та интереснă. Капла мĕн пулассине нихăçан та пĕлме çук. Хăш чух пĕр-пĕрне тăшманла икĕ сасă тухса кайаť: вĕсем çиленеççĕ, вăрçаççĕ, пĕр-пĕрне курайманаççĕ. Теприсем çепĕç те ачашскерсем, вĕсем пĕр-пĕринпе ыталанаççĕ. Кристоф нимрен ытла çак сасăсене йуратаť, вĕсем унăн тусĕсем, унăн савнă, çывăх тусĕсем... Вăл вĕсене ним ывăна пĕлмесĕр итлет.

Пĕрре ашшĕ ачи ройаљ хушшинче ларнине курах кайрĕ. Ача хăранипе чĕтресе илчĕ. Анчах ашшĕ çиленмерĕ, вăл йăл кулчĕ те:

— Ак мĕн ĕçлен есĕ, ашкăнчăк!—тесе пуçĕнчен шăлчĕ.—Сана ройаљ калама вĕрентем-и?

— Вĕрент, вĕрент, атте! Манăн пит вĕренес килет!—тесе кăшкăрса йанă Кристоф савăннипе.

Вĕсем ройаљ умне вырнаçса ларнă. Майлăрах пулма нотă куписем çине ларса, Кристоф вĕренме тытăннă.

## 2

Кристофа ашшӗ хӑшпӗр чухне хӑйӗн пӗр паллаканӗ патне иле-иле кайнӑ. Кунта ернере виҫӗ хут музыкӑ вечӗрӗ тунӑ. Ашшӗ скрипкӑ, аслашшӗ виолончелпа калаңӑ. Оркестрта тата банк чиновникӗ, аптекҫӑпа ватӑ сехетҫӗ пулнӑ.

Итлекен ҫынсем нимӗн чӗнмесӗр ҫтена патӗнче тӑнӑ, пуҫӗсене сулкаланӑ, урисемпе такт пусса тӑнӑ тата пӳлӗме тапак тӗтӗмӗ тултарнӑ.

Кристоф йалан ройаљ хыҫне, хӑйне никам та канҫӗрлемен ҫӗре вырнаҫнӑ. Куҫне тӗтӗм кӗнӗ, пырне кӑтӑклантарнӑ. Анчах вӑл ним те туйман, урисене турккӑсем пек хуҫса ларса пит тимлӗн итленӗ. Хӑш чух вӑл хӗрсе кайса пит-куҫне выљатма тытӑннӑ: сӑмсине пӗркелентернӗ, шӑлӗсене кӑтартнӑ, чӗлхине кӑларнӑ, куҫӗсем пӗр ҫиллӗн, пӗр йӑвашшӑн пӑхнӑ. Вӑл сасартӑк урисемпе такт пусма, аллисене сулкалама тата урисене хускатма пуҫланӑ; унӑн маршласа ҫӳрес, шаккас килнӗ.

Вӑл ытла хыт хускалма пуҫласан, кам та пулин пӗшкӗнсе ройаљ хыҫне пӑхаҭ.

— Мӗн тӑван унта, ашкӑнчӑк? Ройале ан кисрет!—тесе кӑшкӑраҭ ӑна.—Тӗк лар!

Вӑл намӑсланнӑ. Унтан хӑй ӑшӗнче ҫапла пӑшӑлтатнӑ:

—Мӗншӗн йатлаҫҫӗ-ха мана? Епӗ никама та тивместӗп-ҫке! Тӗк лар, теҫҫӗ. Мӗншӗн выљљаҫҫӗ-ха тата ун пек пйесӑсене. Ӑҫтан тӗк ларатӑн унта утсем иртнине, хӗҫпӑшалсем чӑнкӑртатнине, вӑрҫасшӑн ҫунса кӑшкӑрнисене илтсен?

Хӑш пйесӑсем ӑна ӑйӑха йанӑ, урисенче темскер сӑркӑлтатса чупа пуҫланӑ, час-часах вӑл пит хытӑ ҫывӑра-ҫывӑра кайнӑ.

## 3

Пӗрре ашшӗ Кристофа ройаљ хушшинче ларнине курнӑ. Вӑл пӗр самант ун ҫине тинкерсе пӑхса тӑнӑ. Сасартӑк унӑн пуҫне пӗр шухӑш килсе, савӑнтарса йанӑ.

— Мӗнле епӗ кун ҫинчен ӗлӗкрех шухӑшласа пӑхман-ха? Ак пӗтӗм ҫемйешӗн телей пулӗччӗ! Епӗ ачама пӗтӗм Германи тӑ-



Кристоф йалан ройаљ хыçне кĕрсе ларнă

răх çӳретĕттĕм, тен урăх патшалăхсене те илсе кайаттăм,—тенĕ вăл.

Каçхи апат çисенех ашшĕ Кристофа каллех ройаљ хушшине лартнă, ыйăннипе куçĕсем хупăна пуçличченех урока темиçе хут калаттарнă. Тепĕр кун ашшĕ Кристофа ройаљ хушшине виçĕ хут лартнă. Виççĕмĕш кунĕнче те çаплах тунă.

Кун пек ытла хыт вĕрентни Кристофа çав тери йăлăхтарса çитернĕ. Кăмăла кайман, пĕр йевĕрлĕ гаммăсемпе хăнăхтарусене вĕçĕмсĕр каласа ларма кичем пулнă. Вăл хирĕç тăма хăтланса пăхнă. Йури пăтратса ăçта килчĕ унта пусса тӳнкĕртеттерме тытăннă. Ашшĕ çиленсе кăшкăрма пуçланă. Унтан линейкă илнĕ те нотă йăнăш тухмассерен ача хăлхи патне пырса хытă кăшкăрса пăрахнă, пӳрнисене линейкăпа çапа пуçланă.

Ыратнипе Кристофăн питкуçĕ пĕркеленнĕ, макăрса йарас мар тесе вăл тутисене çыртса чăтнă. Йулашкинчен мĕн пур хавалне пухса çапла каланă:

— Атте, ман ройаљ калас килмест,—тенĕ.

Ашшĕ шант хытса кайнă.

— Мĕн?—тесе кăшкăрса йанă вăл.

— Ман урăх калас килмест!—тенĕ Кристоф чĕтресе; хăй çапасран сыхланса, чавсине çĕкленĕ.—Тата епĕ музыкă йуратмастăп... епĕ музыкă йуратмастăп!—тенĕ вăл. Кристоф урайне шуса аннă. Ашшĕ хайарланса кайса, ăна малтанхи вырăна çĕклесе лартнă та унăн аллисемпе ройаљ клавишисене шакка пуçланă.

— Калатăн!—тесе кăшкăрнă вăл.

— Çук! Çук! Каламастăп!—тенĕ Кристоф макăрса.

— Калама хушнисене пĕри йулмиччен каласа тухмасăр сана апат памастăп, лар выçă—кунĕпех, уйхипех лар,—тесе ашшĕ ачине пӳлĕмрен тĕксе кăларса йанă.

Кристоф пылчăклă, тĕттĕм пусма çинче тăрса йулнă. Çӳлтен вăйлă çил вĕрнĕ, çтенасенчен йĕпе сăрхăнса тăнă. Кристоф пусма картлашки çине вырнаçса ларнă. Унăн чĕри siксе тухас пек тапнă тата вăхăтăн-вăхăтăн чарăнсах ларнă. Вăл куççулне пӳрнисемпе шăла-шăла макăрнă.



Пусма çинче сивӗ те тӗттӗм пулнӑ

Kaç пулнă.

Пусма çинче сивĕ те тĕттĕм пулнă.

Пĕчĕк Кристоф, тăмаланса пылчăкланса пĕтнĕскер, пусма картлашки çинче нимĕн хускалмасăр выртнă. Вăл çывăрнă.

4

Йулашкинчен парăнмалах пулнă. Кристоф кашни кун, ирпе виç сехет, каçпа виç сехет, ройаљ хушшинче ларнă. Пичĕ урлă куççулĕ йухтарса, пӳрнисемпе шурă тата хура клавишсем çине кичемĕн пускаласа ларнă ача.

Вăл çав музыкăна тем пекех курайман!

Пĕрре аслашшĕ Кристоф ройаљ хушшинче макăрса ларнă тĕле пынă та мăн çынна каланă пек:

— Музыкă вăл искусствăсенчен чи илемли, чи лайăххи. Ăна пĕрисене лăпланма, теприсене чапа тухма панă. Уншăн пăртак асаплансан та пырать,—тенĕ ăна.

Аслашшĕ сăмаххисем Кристофа лăплантарса, унăн кăмăлне çĕкленĕ.

5

Хулара театр пулнă, унта опĕрăсем, опереттăсем, драмăсем, водевилсем лартнă. Аслашшĕ театра час-часах кайнă. Пĕрре вăл Кристофа опĕрăна илсе кайма пулнă.

Вăл ăна унта мĕн кăтартасси çинчен каласа панă. Ача нимĕн те ăнланман, унта хăрушă йапаласем пуласси çинчен анчах астуса йулнă.

Çав кун вăл аслашшĕне кĕтсе ыйăннă, кашни минутрах чӳречерен пăхнă. Йулашкинчен аслашшĕ пынă та вĕсем пĕрле кайнă. Кристоф чĕри кăрт та кăрт тапнă; çăвар ăшчикки типсе кайнă; вăл çул çинче пĕр сăмах та хушса калайман.

Вĕсем театр патне çитнĕ. Аслашшĕ театр алăкĕнче темле пĕр паллаканпа калаçма тытăннă. Кристоф аслашшĕне аллинчен хытă тытнă. Вăл аслашшĕсем çак самантра çапла лăпкă калаçса кулма пултарнине нийепле те ăнланма пултарайман.

Театра кĕрсенех аслашшĕ оркестăр умĕнче, пĕрремĕш ĕрет-

ре, хӑйӗн йаланхи вырӑнне йышӑннӑ. Вӑл баљустрадӑ*) ҫине тайаннӑ та музыкантсенчен пӗринпе калаҫма тытӑннӑ.

Кристоф залӑ ытла та капӑрринчен шалт тӗлӗнсе ларнӑ. Ҫак хӑнӑхман халӑх ӑна пит иментернӗ. Вӑл пуҫне пӑркалама та хӑйайман. Ӑна пурте ун ҫине пӑхнӑ пек туйӑннӑ. Вӑл картусне чӗркуҫҫисем хушшине хӗстерсе, чарса пӑрахнӑ куҫӗсене чаршав ҫинчен илмесӗр пӑхса ларнӑ.

Йулашкинчен виҫӗ хут звонок панӑ. Оркестӑр музыкӑ каласа йанӑ. Малтанхи аккордсем хыҫҫӑн Кристоф лӑпланнӑ: сасӑсен тӗнчинче ӑна килти пекех туйӑннӑ.

Чаршав ҫӗкленнӗ. Кристоф картонтан тунӑ йӑвӑҫсемпе темӗскерле ҫынсене курнӑ. Вӑл тӗлӗнсе кайнипе ҫӑварне карса итленӗ. Вӑл нимӗн те ӑнланман, анчах ку ӑна кичем пулман...

Вӑл пӑлханса кайнӑ. Хӑш сӑмахсем, алӑпа сулкаланисем, музыкӑ калавӗсем ӑна ытах иментернӗрен, вӑл куҫне ҫӗклесе пӑхма та хӑйайман. Ку лайӑх йе начар иккенне те пӗлмен вӑл; хӑй хӗрелсе-шуралса кайнӑ; вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе вӑл тара ӳкнӗ, хӑй пӑлханнине ыттисем сисеҫҫӗ пулӗ тесе шухӑшласанах кӑрт та кӑрт чӗтренсе илнӗ.

Ытла ӑшӑ пирки ларма та канҫӗр пулнӑ. Кристоф ывӑннипе халран кайнӑ. Анчах унӑн пӗр шухӑш кӑна пулнӑ:

„Ах, тата ытларах пыринччӗ! Ах, ку нихӑҫан та пӗтминччӗ!“—тенӗ вӑл.

Сасартӑк пурте пӗтсе ларнӑ. Вӑл мӗншӗн пӗтнине ӑнланса та илмен. Чаршав аннӑ та пурте пӗр харӑс тапраннӑ. Киле таврӑннӑ чух аслашшӗ те, Кристоф та нумайччен ним сӑмах чӗнмесӗр пынӑ. Йулашкинчен старик:

— Ну, мӗнле, ачам? Кӑмӑлу ҫитрӗ-и?—тенӗ.

— О-о, питӗ!—тенӗ Кристоф, кӑшт илтӗнмеле пӑшӑлтатса.

Старик йӑл кулса илнӗ.

— Музыкант пулма йепле аваннине халђ ӑнланса илтӗн-и ӗнтӗ? Кун пек тӗлӗнмеле йапаласем туни начар-и вара?—тенӗ вӑл.

Кристоф пит тӗлӗнсе кайнӑ. Йепле капла? Халђ вӑл мӗн курни-илтнине пурне те етем тунӑ. Ҫак пур те хӑй тӗлӗнех

*) Баљустрадӑ—сценӑ умӗнчи карлӑк.

пӳлнӑ, ӑна ҫутҫанталӑк хӑйех пултарнӑ пулӗ тесе шутланӑччӗ вӑл. Ҫаксене пурне те етем—музыкант тума пултарнӑ иккен, вӑл хӑй те ҫитӗнсен ҫав музыкант пек пулма пултарать.

— Кам тунӑ-ши ӑна, асатте? Вӑл музыкӑна кам шухӑшласа ҫырнӑ?

— Ӑна Франц Гасслӗр, ҫамрӑк композитӑр ҫырнӑ. Вӑл Берлинра пурӑнать. Епӗр ӗлӗк унпа туслӑ пулнӑ.

— Есӗ тата асатте?—тенӗ Кристоф сасартӑк.

— Мӗн епӗ?

— Есӗ ҫырнӑ-и?

— Паллах,—тенӗ старик ҫиленсе.

Вӑл нимӗн те чӗнмен, ассӑн кӑна сывласа илнӗ. Ача ӑна чи ыратакан вырӑнтан тивертнӗ. Старик театр валӡӡи музыкӑ ҫырас тесе пӗтӗм ӗмӗрне ӗмӗрленӗ, анчах вӑл нихӑҫан та ҫырайман.

Киле ҫитиччен те вӗсем урӑх сӑмах чӗнмен. Вӑл та, ку та ҫав каҫ ҫывӑрман. Кристоф вырӑн ҫинче шухӑшласа выртнӑ. Ҫывӑрса кайа пуҫласанах, унӑн хӑлхинче музыкӑ, ҫумра оркестӑр каласа тӑнӑ пекех, пит уҫҫӑн йанӑраса кайнӑ. Вӑл пӗтӗм кӗлеткипе чӗтренсе кӑшт ҫӗкленнӗ те пӑшӑлтатса илнӗ.

— Хӑҫан та пулсан епӗ те ҫыратӑп ак...—тенӗ.

Ҫак кунран пуҫласа ача каллех театӑра кайасшӑн ҫуннӑ. Тӑрӑшса вӗренсен ӑна театра илсе кайма сӑмах панӑ та, вӑл вара тӑрӑшса вӗрене пуҫланӑ. Кӗтнӗ кун ҫитсен Кристоф апат та ҫимен. Вӑл пӗрмайах сехет ҫине пӑхнӑ, ӑна каҫ нихӑҫан та пулассӑн туйӑнман. Йулашкинчен, урӑх чӑтма пултараймасӑр, спектакӗ пуҫланиччен, пӗр сехет малтан, вӑл килтен тухса кайнӑ. Пушӑ зала вӑл чи малтан пырса кӗнӗ те чӗтресе ӳкнӗ:—йе спектакӗ пулмасан?—тенӗ хӑй ӑшӗнче. Музыкантсем скрипкӑсене ӗнере пуҫласан вара тин лӑпланнӑ.

## 6

Хулара чаплӑ композитӑр-музыкант Франц Гасслӗр килессе кӗтнӗ. Пӗтӗм хула йӑшӑлтата пуҫланӑ. Икӗ ерне хушши пӗр ун ҫинчен кӑна калаҫнӑ.

Кристоф хаӡ пӗр ӗмӗтпе анчах пурӑннӑ — вӑл чаплӑ артиса



Кристоф залӑ ытла та капӑртан шалт тӗлӗнсе ларнӑ

курасшăн пулнă. Халăх ушкăнĕ хушшинче тĕрткелешсе вăл урамра темиçешер сехет тăнă. Анчах унăн композитăра пĕрре те курма май килмен. Кристоф ăна концертра тин курнă.

Çав кун пĕтĕм хула театрта пулнă. Театр пит хавас тумланнă: сценăна йуман турачĕсемпе тата лавр йăвăççисемпе илемлетнĕ.

**Гасслĕр** тухсан, халăх пит хытă алă çупса йанă.

Хĕрарăмсем хăйсен вырăнĕсенчен сике-сике тăнă.

Гасслĕр музыкĕ Кристофа сăмахпа каласа пама çук хаваслантарнă. Вăл вырăнта тĕк ларма пултарайман, пăркаланнă, сике-сике тăнă, пуçне ухнă, алли-урине сулкаланă. Йунашар ларакан çынсем çиленсе унтан инçерех пăрăннă.

Халăх пит савăк пулнă. Йулашкинчен ытла савăнса кайнипе тăвăллăн алă çупса кăшкăрма тытăннă. Хĕрарăмсем чечексем пăраха-пăраха панă, арçынсем шĕлепкесемпе сулнă. Пĕтĕм халăх естрадă патне кайнă: кашниннех ку чаплă çын аллине тытса чăмăртас килнĕ. Кристоф та, кăмăлĕ çĕкленсе кайнипе, мĕнпур вайран естрадă патнеле туртăннă. Анчах ахалех пулнă: вăл, ытла пĕчĕкскер, халăх ушкăнĕ витĕр хĕсĕнсе малала тухма пултарайман.

Концерт хыççăн Гасслĕр музыкантсене пурне те хисеп туса каçхи апат çиме чĕннĕ. Кунта Кристоф аслашшĕпе ашшĕ те пулнă. Аслашшĕ хăйпе пĕрле Кристофа та илнĕ. Вĕсем пысăк зала кĕнĕ. Унта кăнтăрлахи пек çутă пулнă, пур сĕтелсем çине те бутылкăсем тата тĕрлĕрен тутлă апат-çимĕç лартса тултарнă.

Анчах Кристоф нимĕн те асăрхаман: унăн куçĕсем пĕр Гасслĕра анчах курнă.

Сĕтел хушшине ларнă. Гасслĕр хăйпе йунашар виç-тăват музыканта лартнă, вĕсемпе пĕрле Кристофăн аслашшĕ те пулнă. Аслашшĕ Кристофа аллинчен çавăтса пынă та композитăра кăтартнă.

Гасслĕр йăл кулса илнĕ те Кристофа пуçĕнчен кăшт-кашт ачашласа илнĕ. Анчах ку ача музыкăна йуратнине, концерта кĕтсе вăл темиçе каç çывăрманнине пĕлсен, вăл ăна аллинчен тытнă та унтан ăнă кăмăллăн ыйта пуçланă. Кристофăн имен-

нипе чӗлхи ҫыхланса ларнӑ. Вӑл Гасслӗр ҫине пӑхма хӑйайман. Анчах лешӗ аллипе йанаххинчен тытса унӑн питне ҫӗкленӗ.

— Ну, мӗн есӗ чӗнместӗн? Кала-ха, музыкӑна йурататӑн-и? Каласам, йуратнӑ ачам!—тенӗ вӑл.

Кристоф хӑйса куҫне ҫӗкленӗ те Гасслӗрӗн ачашшӑн кулса пӑхакан куҫӗсемпе тӗлех пулнӑ. Вара Кристоф та кулса йанӑ, ҫав тери кӑмӑлтан савӑннипе, унӑн куҫҫулӗсем шӑпӑртатса аннӑ.

Композитӑр ачана ачашшӑн ыталанӑ та шӑппӑн, кӑмӑллӑн каланӑ:

— Ну, ҫитӗ, савнӑ ачам! Ну, ан макӑр! Мӗншӗн макӑратӑн есӗ, ырӑ та савнӑ ачам,—тенӗ.

Вӑл кулӑшла сӑмахсем каланӑ, кӑтӑкланӑ. Кристоф кулнӑ та макӑрнӑ та. Вӑл часах лӑпланса, чаплӑ музыкантпа калаҫа пуҫланӑ.

— Епӗ сирӗн пекех пулатӑп!—тенӗ вӑл.

Гасслӗр ӑшшӑн кулса йанӑ.

— Ҫитӗнсе ҫитсе музыкант пулсан, есӗ ман патӑма Берлина пыр. Пыратӑн-и?—тенӗ вӑл.

Савӑнса кайнипе Кристофӑн чӗлхи ҫӗтнӗ.

— Пырасшӑн мар-и?—тесе ыйтнӑ Гасслӗр.

— Пырас килет! Пырас килет! Йурӑ! Йурӑ! Йурӑ!—тесе кӑшкӑрса йанӑ Кристоф пӗр вӗҫӗмрен пилӗк йеултӑ хут.

— Апла еппин, сӑмах татрӑмӑр?

— Ҫапла! Ҫапла! Ҫапла!—тенӗ Кристоф пуҫне сулса.

— Ну ӗнтӗ, ытала мана!

Кристоф Гасслӗра мӑйран ыталаса илнӗ те мӗнпур вӑйпа ун ҫумне пӑчӑртаннӑ.

— Ну, ҫитӗ, ҫитӗ! Есӗ мана сурчӑкласа пӗтертӗн.

Гасслӗр именнӗ ачан сӑмсипе тутине кула-кула шӑлса илнӗ. Унтан вӑл ӑна урайне антарнӑ та, сӗтел патне илсе пырса, кӑсйисене тутлӑ ҫимӗҫсем тултарса йанӑ.

— Ну, хаљ сывӑ пул! Мана есӗ мӗн сӑмах панине астуса тӑр,—тенӗ вӑл ӑна хӑй патӗнчен йанӑ чух.

Кристоф хӗпӗртенипе кӑшт ҫеҫ чыхӑнса кайман.

Киле таврӑннӑ чух, аслашшӗ савӑннипе хытӑ калаҫса пынӑ:

— Гасслӗр—гени, аслӑ ҫын, ун пек ҫынсем ҫӗр ҫулта та пӗрре кӑна ҫуралаҫҫӗ,—тенӗ.

— Ах, йепле аван çын!—тесе шухăшланă Кристоф вырăн çинче выртнă чух.—Йепле аван! Еп уншăн вилме те хатĕр!..—тесе, телейлĕ куççулне йухтарса, çытара ыталаса илнĕ вăл.

## 7

Кристоф пĕрмайах мĕн те пулин йурланă. Урамра хăрах уран сиксе выљаť-и, аслашшĕ патĕнче урайĕнче картинăсем пăхса выртаť-и, тĕттĕм пулнă чух ним çинчен те шухăшламасăр кухњăра кĕтесри пукан çинче лараť-и—йаланах ĕнĕрнĕ йе питçăмартине хăмпă пек вĕрсе хăпартса тутипе мĕн те пулин каланă. Вăл сехечĕ-сехечĕпе çапла йурланă.

Амăшĕ ун çине çавăрăнса та пăхман, анчах хăшпĕр чухне ăна кăшкăркаланă:

— Чарăнатăн-и есĕ хăçан та пулсан? Нăрлата-нăрлата йăлăхтарса çитертĕн, чарăн, тархасшăн,—тенĕ.

Анчах лешĕ чарăнман: вăл арисем те йурланă. Арийĕсем пур те тĕрлĕрен: пĕрне вăл ирхине, тазра кăвакал чĕппи пĕк шăпăлтатнă чух йурланă; теприне ройаљ умĕнчи пукан çине кичемлĕ гаммăсене калама хăпарса ларнă чух йурланă; виççĕмĕшне урок хыççăн пукан çинчен аннă чух йурланă. Амăшĕ сĕтел çине йашка антарса лартнă чух йурламали ари те пулнă. Вăл апат пӳлĕмĕнчен çывăрмали пӳлĕме чаплă утса кайса, хăйне хăй марш каласа пынă. Хăш чухне вăл хăйĕн икĕ пĕчĕк шăлнĕпе маршласа çӳренĕ.

Пĕрре Кристоф аслашшĕ патĕнче çав арисенчен пĕрне йурла-йурла пӳлĕм тăрăх çӳренĕ чух, йунашар пӳлĕмре сухалне хырса ларакан старик, супăњлесе пĕтернĕ пит-куçне сасартăк алăкран чикнĕ те çапла ыйтнă:

— Мĕн йурлатăн çак есĕ, ача?—тенĕ.

— Пĕлместĕп,—тенĕ ăна хирĕç Кристоф.

Кристоф тепĕр хут йурласшăн пулнă, анчах кĕвви нийепле те аса килмен.

Çакăн хыççăн темиçе кунран Кристоф, хăй тавра пукансем лартса, хăй ваљљи кĕвĕленĕ оперăна выљанă. Вăл йурла-йурла пасем тунă та сĕтел çинче çакăнса тăракан Бетховен[1] сăнĕ

[1]) Бетховен—нимĕçсен чаплă композитăрĕ.

умӗнче пуҫне тайнӑ. Ҫавӑрӑнса пӑхсан вӑл сасартӑк уҫӑ алӑк витӗр пӑхса тӑракан аслашшӗ пуҫне курах кайнӑ.

Кристоф вӑтанса чӳрече патне чупса пынӑ, урамала тинкерсе пӑхам пек пулса тӑнӑ. Старик ун патне ним чӗнмесӗр утса пынӑ та ӑна ыталаса илнӗ; анчах вӑл аслашшӗне мӗнпе ҫав тери тӗлӗнтернине чухласа илеймен: музыкӗпе-и, акторӗпе-и йе ташшипе, мӗншӗн тесен Кристоф хӑйне ташӑ ӑсти тесе шутланӑ.

Пӗр ернерен аслашшӗ ӑна:

— Кил-ха кунта! Епӗ сана пӗр йапала кӑтартап,—тенӗ.

Вӑл ҫыру сӗтелне уҫса унтан нотӑсем ҫырнӑ тетрате туртса кӑларнӑ та ӑна ройаль пӳштӗрӗ ҫине хурса:

— Нукӑ, кала-ха!—тенӗ Кристофа.

Нотӑсене старик алипе шултӑран ҫырнӑ пулнӑ. Кристоф, пит интересленнӗскер, аран-аран чухласа илнӗ.

— Пӗлетӗн-и, ку мӗн кӗвви?—тесе ыйтнӑ аслашшӗ.

— Ҫук, пӗлместӗп,—тенӗ Кристоф.

— Тинкерсе итле, есӗ ӑна пӗлетӗн!

— Темскер палласкер пек. Епӗ кӑна таҫта илтнӗ пек туйӑнат.

— Аса ил! Аса ил!

Кристоф пуҫне сулнӑ. Тӗрӗссипе каласан, унӑн пуҫне пит темле шухӑш килсе кайнӑ: ҫав арисем хӑйӗн пек туйӑннӑ... Анчах ҫук! Вӑл хӑйайман... Вӑл вӗсене хӑйӗн теме хӑйайман...

— Пӗлместӗп, асатте.

Вӑл хӗрелсе кайнӑ.

— Ех, ухмах, илтместӗн-им? Вӗсем санӑн арисем вӗт.

— Ой, асатте!

— Ак куратӑн: „Ари". Есӗ кӑна ытларикун урайӗнче выртнӑ чух йурларӑн. „Марш". Ку,—епӗ сана иртнӗ ернере йурласа пама ыйтрӑм,—ҫавӑ. Ку—есӗ пукансем патӗнче ташланӑ чух калани... Пӑх-ха кунта. Тетрат пичӗ ҫине шултра илемлӗ саспаллисемпе „Жан Кристоф Крафт сочиненийӗсем" тесе ҫырнӑ. Кристоф шалтах тӗлӗнсе кайнӑ. Йепле! Ҫак хулӑм тетрат, ҫавӑн йатлӑскер, унӑн сочиненийӗ! Пичӗ ҫинче унӑн йачӗ тӑрат!

— Ай, асатте!..

— Паллах,—тенӗ старик хӑй пӑлханнине пытарма тӑрӑшса,—

епӗ йури аккомпанимент хушса ҫыртӑм. Унтан тата...—вӑл ӳсӗрме тытӑнна,—унтан тата менует ҫумне трио хушрӑм, кӑна ҫапла тума хушаҫҫе те... епӗ шухӑшлатӑп... мана ку начарах мар пек туйӑнать...

Вӑл хӑйӗн трионе каласа панӑ.

Кристоф аслашшӗпе пӗрле ӗҫленӗрен мӑнкӑмӑлланса кайнӑ.

— Асатте, сан йатна та ҫырас пулать.

— Ну, мӗне кирлӗ вӑл?.. Епӗ ыттисене пӗлтересшӗн мар... санран пуҫне никама та пӗлтересшӗн мар.

Старик ӑна хӑй ҫумне туртса илсе ыталанӑ.

Хӗпӗртесе кайнӑ телейлӗ Кристоф аслашшӗне вӗҫӗмсӗр чуп тума тытӑннӑ. Аслашшӗ те унтан кайа мар савӑнса, ӑна пуҫӗнчен чуп тунӑ.

8

Кристоф аслашшӗ патӗнчен хӗпӗртенипе киле хӗп-хӗрлӗ пулса чупса пынӑ. Килте вӑл хӑйӗн музыкӑ ӑнӑҫӗсем ҫинчен мухтанса каласа панӑ. Анчах унтан килтисем кулса илнӗ. Амӑшӗ унтан тӑрӑхласа илнӗ, ашшӗ:

— Сан аслаҫу ӑсран кайнӑ. Ачан пуҫне ҫавӑрма тытӑннӑ. Санӑн, ачам, ӑссӑр йапаласемпе хӑтланас вырӑнне музыкӑ хӑнӑхтарӑвӗсене пӗрер сехет ытларах вӗренсен аванрах пулӗччӗ. Композитӑр пулма ӗлкӗрӗн,—тенӗ.

Ройалӗ хушшинче ним чӑрмавсӑр шухӑша кайас тесе, Кристоф хӑнӑхтарусем калама ларнӑ. Унӑн пӳрнисем хӑйсем тӗлӗнех клавишсем ҫинче куҫса ҫӳренӗ вӑхӑтра, ӑшра темле сасӑ:

— Есӗ—композитӑр!—тесе темиҫе хут каланӑ.

9

Темӗншӗн ашшӗ Кристоф сочиненисем ҫырни ҫине урӑхла пӑха пуҫланӑ: аслашшӗ ачана мухтанипе килӗшме кӑна мар, вӑл хӑй унӑн алҫырӑвӗсене тепӗр хут ҫыра-ҫыра илме тытӑннӑ.

Ача тӗлӗнсе кайнӑ.

— Кӑсене мӗн тума ҫыра-ҫыра илтӗн, атте?—тенӗ Кристоф.

— Пурӑнсан курӑпӑр!—тенӗ ашшӗ мӑнкӑмӑллӑн, ачине хул пуҫҫинчен лӑпка-лӑпка.

Унтан аишӗпе аслашшӗ ӑрттӑн калаҫма пуҫланӑ.

Пӗрре вӗсем каҫхине Кристофа унӑн сочиненийӗсене аслӑ герцӑга хисеплесе халалани ҫинчен пӗлтернӗ.

Аслӑ герцӑг ҫамрӑк Кристофӑн сочиненийӗсене кӑмӑллӑн йышӑннӑ та хӑйӗн музыкӑ академийӗн залӗнче концерт тума ирӗк панӑ.

Ашшӗ васкаса ӗҫлеме тытӑннӑ. Нотӑсене пичетлесе кӑларнӑ нотсен тетрачӗ хуплашкине илемлетсе винйеткӑсем тунӑ, унта сӑпка, капӑр параппан тата йӑвӑҫ лаша ӳкернӗ.

Питӗ кирлӗ ыйту сиксе тухнӑ: Кристофа концерт ваҫҫи мӗнле тумтир ҫӗлесе памала-ши? Малтан ашшӗ ачине кӗске тумтирпе, ҫара туналӑ, тӑват ҫулхи ача пек кӑларасшӑн пулнӑ. Анчах Кристоф капла тумланма ытла пысӑк пулнӑ. Вара ашшӗн пуҫне пӗр телейлӗ шухӑш пырса кӗнӗ. Ачана вӑл фрак тӑхӑнтарса шурӑ галстук ҫыхтарма шухӑшланӑ. Кристоф ҫавнашкал тумтирпе пит кулӑшла пулассишӗн амӑшӗ шикленнӗ пулсан та ҫаплах тумлантармала тунӑ. Тата крахмалпа шуратнӑ сорочкӑ, лакпа ҫутатнӑ пушмак кирлӗ пулнӑ.

Кристофа хӑйӗн ҫӗнӗ тумтирӗпе пит кансӗр пулнӑ. Фрак тӑхӑнса ҫӳреме хӑнӑхтарас тесе ӑна килте фрак тӑхӑнтарса хӑйӗн пйессисене калаттарнӑ. Унтан тата пуҫ тайма вӗрентнӗ.

Ашшӗ ачине пур йенчен те ҫаврӑкаласа пӑхсан, хӑйне ҫамкинчен шарт ҫапнӑ, унтан таҫта чупса кайса пысӑк чечек илсе килнӗ те ӑна ачан тӳме йаллине чиксе лартнӑ.

Ку тума пурте ырланӑ. Анчах амӑшӗ Кристоф ҫине пӑхса илнӗ те, аллине шарт ҫапса, кӑшкӑрса йанӑ:

— Йепле кулӑшла пулса кайнӑ есӗ, ылттӑнӑм! Есӗ чӑнчӑн упӑтех пулса тӑнӑ-ҫке!—тенӗ вӑл.

Амӑшӗн ҫак сӑмахӗсем Кристоф кӑмӑлне хуҫсах пӑрахнӑ.

Мухтанмала-и йе намӑсланмала-и ӗнтӗ ку тумпа,—вӑл нимӗн те пӗлмен.

## 10

Концерт пуҫланас сехетре ҫур залӑ пушӑ пулнӑ. Аслӑ герцӑг та пыман пулнӑ.

Ашшӗ хумханса калла-малла уткаласа ҫӳренӗ, час-часах

пуçне чӳречерен чике-чике пăхнă. Аслашшĕ те асапланнă. Кристоф ашшĕпе аслашшĕ çине хăра-хăра пăхнă. Халăх умне тухса пуç таймалли хăрушă вăхăт çывхарса килнĕ, çак шухăш ăна пăр пек шăнтса пăрахнă.

Çапах та пуçламала пулнă: халăх ал çупнă, урасемпе тапăртатнă.

Оркестăр музыкă каласа йанă.

Кристоф музыкăна кулис хыçне пытанса итленĕ. Сасартăк музыкă чарăннă, унтан тепĕр минутран пăхăр трубасемпе, литавăрсемпе марш каласа йанă.

Кăна оркестр герцăг пырса кĕнĕ майпа саламласа каланă мĕн.

Ашшĕ савăннипе ним тума пĕлмен. Аслашшĕ мĕн тумалисене Кристофа хăлхаран пăшăлтатса каланă.

Кристофăн черет çитнĕ.

Ачана кулис патне çавăтса пынă, естрадă варринче ларакан ройале кăтартса панă: ăна йулашки хут хăлхаран темĕн пăшăлтатса каланă та... сценă çине тĕксе кăларса йанă.

Кристоф тӳрех хăраса кайман. Анчах вăл естрадă çине пырса кĕрсен, ун çине пин куç шăтарас пек пăхнине асăрханă та, хăраса кайнипе ирĕксĕрех кайала йарса пуснă. Кулис хыçĕнчен ашшĕ ун çине хайар куçĕсемпе пăхса, ăна чышкисемпе йунаса тăнă.

Мĕн хушнине итлесе ача малала утнă.

Халăх ăна асăрханă ĕнтĕ. Халăх хушшинче пăшăлтата пуçланă. Унтан такам кулса йанă. Кристоф ройаль патне çывхарса пынă. Халăх кăтралатнă çӳçлĕ светски çынăн тумтирне тăхăннă ачана курсан, ытларах та ытларах кулнă.

Ку кулăра ăна ырă сунманни пулман, анчах çапах та вăл ун пек çĕре тухкаласа курнă артиса та ментерме пултарнă. Кристофăн, шавланинчен тата хăй çине тĕллесе пăхакан бинокăльсенчен хăраса кайнăскерĕн, пуçра пĕр шухăш çеç пулнă: ройаль патне часрах çитесчĕ,—тенĕ.

Вăл пуçне уссаваскасах рампă тăрăх утса кайнă та, сценă варрине çитсен, халăха ашшĕсем хушнă пек тайăлас вырăнне çурăмĕпе халăх йенне çаврăнса, ройаль патне утса кайнă.

Пуканĕ çӳлĕ пулнă. Кристоф ун çине çын пулăшмасăр ларма пултарайман. Анчах вăл ашшĕне кĕтсе тăман, пукан çине кармашса хăпарса ларнă. Халăх каçса кайса кулнă.

Халь ĕнтĕ Кристоф хăтăлнă: хăйĕн инструменчĕ умĕнче вăл урăх никамран та хăраман.

Йулашкинчен ашшĕ тухнă, ăна ал çупса йышăннă.

Концерт пуçланнă. Пĕчĕк ача ним иккĕленмесĕр, хăй çине шанса каланă; вăл тутисене тăп тытнă, куçĕсем клавишсем çине тинкерсе пăхнă; пĕчĕк урисем урайне çитмесĕр çакăнса тăнă.

Хăлхана пăшăлтатса ырланă сасăсем пырса кĕнĕ, пурте нимĕн чĕнмесĕр итлесе ларни ăна кăмăллă пулнă.

Анчах каласа пĕтерсенех вăл каллех хăрама тытăннă. Ал çупнинчен вăл намăсланса кайнă. Ашшĕ ăна аллинчен тытса, рампă патне илсе пырса пуç тайма хушсан, вăл тата ытларах вăтанса кайнă. Вăл аран-аран пуçне тайкаланă, темĕнскер аван мар йапала тунă пек, пит вăтанса хĕрелсе кайнă.

Кристофа каллех ройаль хушшине çĕклесе лартнă. Ку хутĕнче вăл хăй çырнисене каланă. Кашни пйесă хыççăнах халăх хĕпĕртенипе кăшкăрнă. Йулашкинчен, пурте сиксе тăнă та, пĕр çын пек пĕр харăс ал çупма тытăннă: куна аслă герцăг ал çапнă пек туса сигнал панă.

Ку хутĕнче сценă çинче пĕчченех пулнă пирки, Кристоф пуканĕ патĕнчен пăрахса кайма шутламан. Вăл пĕтĕмпех хĕрелсе кайса пуçне айаларах та айаларах тайса, халăх йеннеле пĕр вĕçĕмсĕр пăхса ларнă.

Ашшĕ ун патне пынă. Ăна аларан тытнă та патша тавращĕ ларакан ложă йенне хисеплĕн тайăлма хушнă. Кристоф вырăнтан та тапранман. Ашшĕ ăна пăшăлтатса хăтăрса илнĕ. Вара ача аллине нимĕн тĕлсĕр сулса илнĕ; анчах вăл никам çине те куçне çĕклемен, пăрăнса кайма тăрăшнă.

Йулашкинчен, ашшĕ ăна урайне антарса йарсан, Кристоф васкаса кулис хыçне кайнă. Пĕр хĕрарăм ăна фиалкă чечек çыххи пăрахса панă, вăл ăна питĕнчен тивнĕ. Çавăнтан вăл пит хăраса, хыта чупса кайнă, çул çинче такăнса пукана ӳпĕнтерсе



Кристоф ройалҫ патне ҫывхарса пынӑ

йана. Халăх каллех кулса йанă, Кристофĕ вăтанса çĕр тĕпне анса кайас патнех çитнĕ.

Йулашкинчен вăл кулис хыçне йашт анчах кĕрсе кайнă. Кунта та çынсем кĕпĕрленсе тăнă. Вĕсем ăна ал çупнă. Вăл вĕсене пуçĕпе тĕксе сирнĕ те фойене пытаннă.

Аслашшĕ пит хĕпертенĕ. Оркестăр музыканчĕсем каçăхса кайса кулнă, хăйсенчен вĕçерĕнсе тарасшăн тата вĕсене ал парасшăн пулман Кристофа саламланă. Ашшĕ залăра ал çупнине итленĕ те Кристофа калех сценă çине илсе тухасшăн пулнă.

Анчах Кристоф аслашшĕн çуртукĕнчен йарса тытнă та пуçне силлесе кăна тăнă, кам ун патне пынă, вĕсене урипе тапа-тапа сирсе йанă, йулашкинчен унăн куççулĕсем йухса аннă, вара ун патĕнчен пурте кайнă.

Çав вăхăтра вĕсем патне офицер пынă та герцăг артиссене хăй патне ложăна чĕнет, тесе пĕлтернĕ.

Ачана кун пек питпе йепле кăтартас? Ашшĕ йатлаçнă. Кристоф ӳлесех макăрнă. Йулашкинчен, аслашшĕ Кристофа—макăрма чарăнсасăнах шоколад конфечĕ парап, тенĕ те, Кристоф сасартăк макăрма чарăннă. Вăл герцăг патне кайма килĕшнĕ. Анчах аслашшĕпе ашшĕн ăна улталамастпар, сценă çине илсе тухмастпăр, тесе сăмах памала пулнă.

Ложă умĕнчи хăна пӳлĕмĕнче ăна мундир тăхăннă, шăрт сухалă, шĕвĕр йанахлă çын патне илсе пынă. Çакă аслă герцăг пулнă. Вăл Кристофа пысăк аллипе питĕнчен лăп-лăп тутарса илнĕ те ăна çĕн Моцарт*) тесе каланă.

Унтан ачана аслă герцогинйăпа хĕрĕ патне тата вĕсен таврашĕнчи çынсем патне илсе пынă. Анчах вăл куçне çĕклеме хăйайман пирки, тумтирисемпе мундирсене пилĕкрен пуçласа арки таран çеç астунă.

Принцессă арки çинче ларнă чух вăл йăшăлт тума та, сывласа илме те хăйайман. Вăл Кристофран темскер çинчен ыйтнă.

Ашшĕ вăл мĕн ыйтнине хирĕç хисеплесе каланă, анчах вăл ăна итлемен, ачана ыйтусем пама пуçланă.

---

*) Моцарт—нимĕçсен чаплă композитăрĕ. Вăл ача чухнех чапа тухнă.

Кристоф хӗрелнӗҫем хӗрелне. Кӑна пӗтӗмпех сисеҫҫӗ пулӗ,-тесе вӑл йӑвӑррӑн сывласа илнӗ те каланӑ:

— Еп хӗрелсе кайрӑм. Мана ӑшӑ,—тенӗ.

Хӗр уҫӑ сасӑпа кулса йанӑ.

Ҫав вӑхӑтра Кристоф коридорта аслашшӗ хӗпӗртенипе ҫуталса тӑнине курнӑ. Вӑл хӑйӗн мнукӗ ҫине айакран ачашшӑн пӑхса тӑнӑ.

Кристоф аслашшӗне йуратса хӗрхенсе кайнӑ. Унӑн мӗскӗн старике те мухтаттарас килнӗ. Унӑн чӗлхи уҫӑлса кайнӑ; вӑл принцессӑ хӑлхи патне пӗшкӗннӗ те пӑшӑлтатса каланӑ:

— Ман сире пӗр секрет калас килет.

Принцесса кулса йанӑ та ыйтнӑ.

— Мӗн секрет?—тенӗ.

— Есӗр епӗ хаљ каланӑ илемлӗ триона пӗлетӗр? Астӑватӑр-и? (Вӑл йерипен кӗввине йурласа панӑ). Ну, вӑт ҫавна асатте ҫырнӑ, епӗ мар. Ыттисем манӑн, ку, ыттисенчен чи аванни,— асаттен. Анчах вӑл ун ҫинчен никама та пӗлтересшӗн мар. Есӗр никама та каламӑр-и? Ав вӑл, асатте,—тесе вӑл пӳрнипе аслашшӗ ҫине кӑтартнӑ.—Епӗ ӑна пит йурататӑп. Вӑл пит аван ҫын,— тенӗ.

Ҫамрӑк принцессӑ ахӑлтатса кулса йанӑ, вӑл—ҫав тери лайӑх ача тесе кӑшкӑрса, Кристофа чуп туса пӗтернӗ, Кристоф аслашшӗн секречӗ ҫинчен ҫынсене каласа панӑ. Пурте кулса йанӑ, аслӑ герцӑг аслашшӗне чӗнсе илсе, ӑна темиҫе кӑмӑллӑ сӑмах каланӑ.

Старик пит именсе кайнӑ. Хӗр ҫапла хытланнӑ хыҫҫӑн Кристофӗ ӑна пӗр сӑмах та шарламан. Хӗр унпа выљанӑ, ӑна йӑпатнӑ, кулнӑ, шӳтле сӑмахсем каланӑ, анчах Кристоф ним сӑмах та хушмасӑр сиввӗн пӑхса ларнӑ, вӑл принцессӑна хӑй сӑмахне тытманшӑн курайман.

Вӑл ытла та тарӑхса кайнипе хӑйне мӗн каланине нимӗн те итлемен, герцӑг сывпуллашнӑ чух ӑна шӳтле хӑйӗн кил таврашӗнчи пианисӗ тесе каланине те илтмен.

Кристоф ашшӗпе тата аслашшӗпе пӗрле герцӑг ложинчен тухсан, вӗсене театр коридорӗнчех тата театр алӑкӗ умӗнче



Кристоф перона пăрахнă та макăрса йанă

халăх каллех сырса илнĕ. Ăна мухтанă, пуçĕнчен ачашланă, чуп тунă. Кристоф кӳреннипе питкуçне пĕркелесе анчах тăнă.

Йулашкинчен, киле çитнĕ, анчах ашшĕ ăна çиййĕнчех йатласа тăкнă:

— |Идиот!—тенĕ вăл.—Сана асласçу çырнă трио çинчен лĕпĕртетме мĕне кирлĕ пулчĕ. Тăмсай!

Анчах Кристоф хăй тĕрĕс тунине хытă шаннă, çавăнпа та вăл çиленсе ашшĕне хăртмали сăмахсем каласа пĕтернĕ.

Ашшĕ шăртланса кайнă, анчах ҳăйне-хăй чарнă.

— Ну, санăн,—телей тенĕ вăл,—есĕ пайан чылай лайăх каларăн. Вăл пулман пулсан, епĕ сана чышкă муклашкисем парса тултараттăм.

Тарăхса кайнипе никампа та калаçасшăн мар пулса, Кристоф кĕтессе кĕрсе хĕсĕнсе ларнă.

Çав вăхăтра герцăг лакейĕ аслă герцăгран парне пама илемлĕ ылтăн сехет, принцессăран пĕр коробкă пит аван конфет илсе пынă. Кристоф савăннипе лăпланнă.

Анчах мĕн ытларах кăмăла килнине вăл пĕлмен—сехет-ши йе конфет.

Çапах та вăл тутине тăсма чарăнман.

Ашшĕ Кристофа çавăнтах, хăй каласа пынă пек, тав туса çыру çырма хушнă.

— „Вашĕ величĕствăн тарçи-музыкант“,—тесе çырма хушнă ашшĕ çырăвăн пуçламĕш сăмахĕсене.

Кристоф перона пăрахнă та макăрса йанă. Ăна кун пек сăмахсем калама намăс пулнă.

Ашшĕ тем чул çине тăрсан та, Кристоф кутăнлашса пуçне анчах силленĕ. Лакей кулкаласа кĕтсе тăнă. Çырăва ашшĕн хăйĕн çырмала пулнă.

Ача сасартăк ылттăн сехете ӳкернĕ.

— Апла пулсан, сана пылак апатсăр хăваратăп!—тесе кăшкăрса йанă ашшĕ.

Кристоф ҫилленсе:

— Мана пылак апат кирлӗ мар. Манӑн конфет пур,—тенӗ.

— Конфетне те туртса илетӗп!—тенӗ ашшӗ кӑшкӑрса.

Кристоф ҫиленнипе нимӗн тума пӗлмесӗр урипе тапӑртата пуҫланӑ.

— Конфетсем манӑн! Манӑн!...—тенӗ.

Ашшӗ ӑна ҫапса йанӑ. Кристоф ытла та тарӑхса кайнипе, коробкӑна амӑшӗ аллинчан туртса илсе ҫӗре пӑрахнӑ, ӑна урисемпе таптама тытӑннӑ. Ҫапла хӑтланнӑшӑн ӑна хӗнесе илнӗ те хывӑнтарса вырӑн ҫине вырттарнӑ.

Вырӑн ҫине выртнӑ чух Кристоф ашшӗ-амӗшӗсем тусӗсемпе пӗрле апат ҫинине, сасӑпа ахӑлтатса кулнине, черкисене шаклаттарнине итленӗ. Ку апат—концерт йачӗпе ерне малтан заказ парса хунӑскер пулнӑ.

— Геройӗ ӑҫта-ха?—тесе ыйтнӑ хӑнасем.

— Вӑл пит ывӑннӑ, ҫывӑрать,—тенӗ ашшӗ. Часах Кристоф ҫинчен пурте манса кайнӑ.

11

Апат хыҫҫӑн тин, хӑнасем саланнӑ чух, пӳлӗмре ура сасси шӑк-шак илтӗннӗ. Аслашшӗ пӗшкӗнсе ачана ачашшӑн ыталаса илнӗ те:

— Мӗскӗн Кристофӑм!—тенӗ.

Унтан ачана темиҫе конфет тыттарнӑ та, именнӗ пек пулса, часах тухса кайнӑ.

— Ырӑ асатте,—тесе Кристоф лӑпкӑн сывласа илнӗ. Анчах ытла та ӗшеннипе пылак йапаласене тӗкӗнмен те.

Вӑл ывӑннипе халран кайса ҫавӑнтах ҫывӑрса кайнӑ.

Унӑн йӑхи лӑпкӑ пулман. Пуҫӗнчен пуҫласа урисем патне ҫитиччен унӑн кӗлетки сӑр-сӑр сӑрлатса тӑнӑ. Тӗлӗкӗнче тискер музыкӑ ӑна канӑҫ паман.

Ҫӗрле вӑл вӑраннӑ.

Ăна пит илемлĕ музыкă илтĕнсе кайнă. Вăл вырăн çинчен çĕкленнĕ те куçне шăлса уçнă: ку тĕлĕкре-ши йе чăнахах? Çук вăл çывăрман. Вăл музыкăна уççăнах илтнĕ. Вăл кулса йанă. Ун кулли çĕрлехи шăплăхра сиввĕн илтĕнсе кайнă.

Ашшĕ вăраннă та шикленсе ыйтнă:

— Кам унта?—тенĕ.

— Шăп пул, Кристоф аташать,—тесе пăшăлтатнă амăшĕ.



РОМЕН РОЛЛАН.

◆

ЖАН КРИСТОФ

Ответ. ред. М. РОМАНОВ.
Техредактор Ф. ЯКОВЛЕВ.
Корректор М. АЛЕКСЕЕВ.

Послано в пр-во 15/I—38 г.
Подп. к печати 13/II—38 г.
Уполн. Чувашлита № 1390.
Заказ № 42. Тираж 5000 экз.
Ст. фор. бумаги 60×92/16
Об'ем 1,75 печатных листа.

Типография № 1 Полиграф-треста, гор. Чебоксары.

Хакĕ 50 пус


# ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВĂ ИЗДАТĔЛСТВИ

КĔÇĔН ÇУЛХИПЕ ВĂТАМ ÇУЛХИ АЧАСЕМ ВАЂЉИ

## „КĔНЕКЕ ХЫÇÇĂН КĔНЕКЕ"

ЙАТЛĂ БИБЛИОТЕКĂ КĂЛАРАТ.

*ХАЛĔ ÇАК КĔНЕКЕСЕМ ТУХРĔÇ:*

1. М. СИБИРЙАК — Кăвак мăй.
2. И. С. ТУРГЕНĔВ — Путене.
3. А. П. ЧЕХĂВ — Хушка çамка.
4. В. ГАРШИН — Çигнал.
5. Ґ. СЕНКЕВИЧ — Йанко музыкант.
6. В. КОРОЛЕНКĂ — Сутăн илнĕ ача.
7. ДЖЕК ЛОНДОН — Киш çинчен çӳрекен йумах.
8. РОМЕН РОЛЛАН — Жан Кристоф.
9. УЙДА—Çеçен хир.
10. ГРИММСЕМ — Бремĕн музыканчĕсем.
11. ГРИММСЕМ — Хĕрлĕ çĕлĕк.
12. ГАЙДАР — Тăваттăмĕш блиндаж.
13. Д. ГРИГОРОВИЧ — Резинă ача.
14. СЕТОН-ТОМПСОН — Çурăк хăлха.
15. Л. ТОЛСТОЙ — Филипок.
16. Л. КАÇÇИЛ — Туркă бутсисем.
17. В. П. ЧКАЛОВ — Пирĕн вĕçев историйĕ.